Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

80 (8041) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Тĕслĕх шыраса инçе ан кай

«Çулталăк çемйи» конкурс çĕнтерӳçисем



*Оринин ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче пурăнаççĕ районта иртнерĕ «Çулталăк çемйи» конкурс çĕнтерӳçисем: райцентрти «Солнышко» ача сачĕн аслă воспитателĕ Оксана Валерьевна тата «Оринино» хуçалăх ертӳçин çумĕ Алексей Георгиевич Прокопьевсем хĕрĕпе Юльăпа. Вĕсен ашшĕ тата аслашшĕ Георгий Федорович Муркашри кирпĕч заводĕнче 30 çул ытла «хурçă утпа» ĕçленĕ. Амăшĕ, асламăшĕ – Зинаида Александровна – нумай çул «АвтоВас» предприятин Муркашри автостанцийĕнче кассирта тимленĕ. Тăрăшуллă та ĕçчен мăшăр хĕрпе ывăл çуратса ӳстерсе ĕçе юратма вĕрентнĕ.*

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Октябрĕн 14-мĕшĕнчи суйлав итогĕсем

## Сасăлав итогĕсем паллă

***Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Александр Цветков вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен вăхăт тухмасăрах иртнерĕ тата хушма суйлавĕсенче сасăланин малтанхи итогĕсем çинчен пĕлтернĕ.***

Пĕтĕмĕшле илсен, суйлав лăпкă лару-тăрура, йĕркеллĕ иртнĕ. Ответлă структурăсем – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, ĕç тăвакан влаç органĕсем, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн администрацийĕ, пур суйлав комиссийĕсемпе право сыхлавĕн органĕсем пĕрле çыхăнса ĕçленĕ. Кăтартусем объективлă, суйлавçăсен шухăш-кăмăлне туллин палăртаççĕ.

Суйлавçăсен активлăхĕ суйлавран суйлава ӳссе пынине палăртмалла. Активлăх енĕпе Чăваш Ен Раççей шайĕнче малти 10 регион шутĕнче. Суйлавçăсен списокĕсене кĕртнисен 60 ытла процентĕ суйлав участокĕсене пырса сасăлама кăмăл туни – питĕ лайăх кăтарту. Ку вăл интересленекен структурăсем çыхăнса пахалăхлă ĕçлени пирки калать.

Кăтартусем объективлă терĕмĕр. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ çавăнпа та уйрăлса тăрать. Суйлавçăсем чи малтанах конкретлă çыншăн, шанăçа тивĕçнишĕн, ялта хăйсем пурте пĕлекеннишĕн сасăлаççĕ. Çавна май кун пеккисен çĕнтерĕвĕ те сумлă.

Республикипе пĕтĕмĕшле вакантлă 46 мандатшăн сасăлав иртнĕ. Ял тăрăхĕсен 25 пуçлăхне, район шайĕнчи 9 тата ял тăрăхĕ шайĕнчи 12 депутата суйланă. 46 мандатран 42-шне «Единая Россия» политика партийĕн представителĕсем тивĕçнĕ, 1 кандидата КПРФ сĕннĕ тата 3-шĕ – хăйсен кандидатурисене хăйсем сĕннисем.

**Муркаш районĕпе Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйланă. Суйлав итогĕсемпе Муркаш ял тăрăхĕпе Сергей Николаевич Ермолаев, Чуманкасси ял тăрăхĕпе Николай Валерианович Белов, Йӳçкасси ял тăрăхĕпе Анатолий Николаевич Кузьмин çĕнтернĕ. Вĕсем виççĕшĕ те «Единая Россия» политика партийĕн представителĕсем.**

### Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланă

Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2012 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнчи 69/3 № йышăнăвĕнчен

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăннă:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.
2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах иртнерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.
3. Сергей Николаевич Ермолаев Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокĕсене кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 3058.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 1442.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 176.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 77.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 1541.

Кандидатсем сасă пухнă:

Е.Н. Алексеев – 70 (4,33 процент).

**С.Н. Ермолаев – 1294 (79,98 процент).**

В.В. Ямангеев – 177 (10,94 процент).

Сасăлава хутшăннă – 1618 (52,91 процент).

### Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланă

Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2012 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнчи 69/2 № йышăнăвĕнчен

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăннă:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.
2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах иртнерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.
3. Николай Валерианович Белов Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокĕсене кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 1165.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 514.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 93.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 59.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 548.

Кандидатсем сасă пухнă:

**Н.В. Белов – 481 (79,24 процент).**

Ю.Г. Леонтьев – 67 (11,04 процент).

Сасăлава хутшăннă – 607 (52,10 процент).

### Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланă

Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2012 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнчи 69/1 № йышăнăвĕнчен

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăннă:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.
2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах иртнерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.
3. Анатолий Николаевич Кузьмин Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокĕсене кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 1677.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 851.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 197.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 36.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 1012.

Кандидатсем сасă пухнă:

**А.Н. Кузьмин – 761 (72,61 процент).**

А.М. Степанов – 251 (23,95 процент).

Сасăлава хутшăннă – 1048 (62,49 процент).

Республикăра

## Çурт-йĕре йӳнетме пулăшĕ

***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Чăваш Республикинче çурт-йĕр строительствине аталантарассине хавхалантармалли хушма мерăсем çинчен» 114 № Указа алă пуснă. Вăл пурăнмалли условисене лайăхлатмалли граждансене туянма май пур тата хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерес тĕллевпе çурт-йĕр строительствине çĕнĕ хăват пама тивĕç.***

«Энерги перекетлекен çĕнĕ йышши материалсемпе тата технологисемпе усă курса эконом-класс йышши сахал хутлă тата туянма май пур çурт-йĕр туни харăсах темиçе тĕллеве пурнăçлама пулăшĕ. Строительство калăпăшĕ палăрмаллах ӳсет, тăваткал метр хакĕ чакать, вăтам тата пĕчĕк тупăшлă çемьесене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе çыхăннă çивĕч ыйтăва кĕске вăхăтра татса паратпăр. Унсăр пуçне граждансен социаллă яваплăхĕ ӳсет, вĕсем экологи енĕпе таса çĕрте пурăнассине тивĕçтеретпĕр. Ку Чăваш Ен çыннисен пурнăç тăршшĕне тăсма, демографи лару-тăрăвне лайăхлатма та пулăшмалла», – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ тунти кун Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе иртнерĕ канашлура.

## Паян – пĕрлехи информаци кунĕ

Пĕтĕм республикăри пекех пирĕн районта та паян пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн темисем – РФ Президенчĕн Владимир Путинăн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи 596-606 номерĕсемлĕ указĕсене вăя кĕртессипе республикăри ĕç тăвакан влаç органĕсем тата вырăнти самоуправлени органĕсем умне тухса тăракан задачăсем çинчен, çамрăк çемьесене çурт-йĕр ыйтăвне татса пама патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе çинчен, республикăра тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси çинчен.

Информаци кунне хутшăнакансем Муркаш, Хорнуй, Турай, Йӳçкасси, Юнкă, Ярославка, Шетмĕпуç, Оринин, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка, Катькас, Çатракасси, Уйкас Янасал ял тăрăхĕсенчи ĕç коллективĕсенче пулаççĕ, ял çыннисемпе тĕл пулса калаçаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

**16 сехетре райадминистрацин 308 пӳлĕмĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе информаци ушкăнĕн ертӳçи – ЧР гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн пуçлăхĕ Вениамин Петров йышăнать.**

Çĕр ыйтăвĕпе

## Парăм тӳлевпе илемлĕ

Çĕрпе тĕллевлĕ те тӳлевлĕ усă курмалла. Раççей Федерацийĕ тата Чăваш Республики шайĕнче ку тĕлĕшпе саккунсем епле пурнăçланнине, çавна май патшалăх интересĕсене шута хунине çирĕп тĕрĕслеççĕ.

Муниципалитет çĕрĕпе арендăра усă курнăшăн тӳлемелли парăм район шайĕнче кăçалхи август уйăхĕ тĕлне пĕтĕмпе 2 миллион тенке яхăн пулнă. Çакăнта тĕрлĕ формăллă хуçалăхсем, предприятисем кĕреççĕ. Енчен те укçа-тенкĕ вăхăтра пухăнсан вăл е ку ĕçе пурнăçлама питĕ пысăк тĕкĕ пулмалла.

Çапах та парăм тӳлевпе илемлĕ. Ăна пурпĕр тӳлеме тивет. Унтанпа вăхăчĕ нумаях иртмерĕ пулин те, парăм шайĕ палăрмаллах чакрĕ. Район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕ пĕлтернĕ тăрăх октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 188 пин те 200 тенкĕ юлнă. Йĕркене пăсакансемпе халĕ уйрăм ĕç пырать. Район администрацийĕ çĕрпе усă курнăшăн пурне те вăхăтра тӳлесе татма сĕнет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Саламлатпăр



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Макаçи ялĕнче пурăнакан **Людмила Васильевна СЕМЕНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Мăнаçлă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, ирхи сывлăм пек таса сывлăх, çурхи хĕвел пек ăш пиллĕн шăранса тăракан савăк кăмăл сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр. Хисеплĕ Людмила Васильевна, умри çулу яланах анлă та çутă, такăр пултăр.

**Пысăк салампа: Крючковсен, Васильевсен, Даниловсен çемйисем.**



Хаклă çыннăмăра, Муркашра пурăнакан **Мария Прохоровна МАРТЫНОВĂНА** 85 çулхи юбилейпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, асаннене çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, лăпкă ватлăх сунатпăр. Эсĕ пире яланах пулăшса, кирлĕ канашсем парса кăмăла çĕклетĕн, вăй-хал парса тăратăн. Ачусем, мăнукусем, кĕçĕн мăнукусем те ырă ĕçсемпе, лайăх хыпарсемпе кăна савăнтарса чунна ăшăтса тăччăр. Тайма пуç сана, тăванăм.

**Салампа чи çывăх çыннисем.**

# «Ырă улшăнусем сахал мар, çитменлĕхсем пирки те манма юрамасть»

Шалти ĕçсен районти пайĕнче

***Иртнĕ эрнере районти полицейскисем тăхăр уйăхри ĕçе тишкерчĕç. Пакунлисен ĕçне пĕтĕмлетме Раççейри Чăваш Республики тăрăх Шалти ĕçсен министерствин обществăлла йĕркене сыхлассине йĕркелекен тата РФ субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсемпе тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çыхăнса ĕçлекен управлени пуçлăхĕн çумĕ С. Наумов килсе çитрĕ. Правăна сыхлакан органсен районти представителĕсем те ĕçлĕ канашлăва хутшăнчĕç.***

Пай пуçлăхĕ Е. Плечов малтанах доклад туса пачĕ, тăхăр уйăхри ĕç итогĕсемпе паллаштарчĕ. Евгений Иванович тухса калаçнинчен полицейскисен ĕçĕнчи лайăх енсем те, тимлĕх ытларах ыйтакан ыйтусем те палăрчĕç. Граждансенчен йышăннă заявленисене тата хыпарсене тишкерессипе иртнĕ тапхăрта пĕлтĕрхинчен чылай ытларах ĕçленĕ. Çынсем полицие пулăшу ыйтса пыни е шăнкăравлани шанчăк ÿснипе те çыхăннă. Преступленисене уçса парассинче те тепĕр утăм маларах туни курăнать. Уголовлă ĕçсене чарса лартасси те пĕлтĕрхипе танлаштарсан сахалтарах пулнă. Апла сотрудниксен ĕç ăсталăхĕ ÿссе пыни пирки те каламалла. Районта çынна вĕлерессипе преступлени пулман. Куншăн, паллах, правăна сыхлас органсен кăна мар, пурин кăмăлĕ те хăпармалла. Полици сотрудникĕсем пĕр единица хĕç-пăшал туртса илнĕ (кун пекки районта юлашки 5 çулта пулманнине пĕлтерчĕç канашлура) – çакă та питĕ пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен вăл пулма пултаракан преступленисене асăрхаттарнипе тÿрремĕнех çыхăннă.

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн следстви уйрăмĕ хăйĕн ĕç кăтартăвĕсемпе республикăри ĕçтешĕсенчен чи лайăххи пулса тăнă. Дознани уйрăмĕн те ĕç пахалăхĕн шайĕ хăпарнине палăртрĕç.

Çав вăхăтрах уголовлă шыравăн ĕçне эффективлăрах йĕркелемелли пирки те, обществăлла вырăнсенче тунă преступленисем тавра та калаçу тĕплĕ пулчĕ.

Ял тăрăхĕсенче халăх дружинисем йĕркеллĕ ĕçлесси хальлĕхе пулса пымасть-ха. Ку ыйтупа район шайĕнче чылай ĕçлĕ калаçу пулчĕ. Анчах та дружинниксене укçан хавхалантарассине çирĕплетмен-ха. Çавăнпа та, пĕтĕмĕшле илсен, ĕçĕ хут çинче кăна темелле. Районта иртекен пысăк мероприятисенче халăх дружинникĕсене курма пулать. Анчах та ял тăрăхĕсенче кунсерен дежурствăсем йĕркелессинчен хальлĕхе эпир инçерех тăратпăр-ха. С. Наумов çак ыйтăва татса парассине вăраха ямалла маррине асăрхаттарса каларĕ. Çынсем хăйсене хăрушсăрлăхра туйни пĕлтерĕшлине тепĕр хут аса илтерчĕ.

Ял тăрăхĕсем тенĕрен. Унти профилактика канашĕсен çителĕксĕр ĕçĕ пирки ку хутĕнче те трибунăран сăмах пулчĕ. Юнкă ял тăрăхĕнчи профилактика канашне тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕç. Вĕсен ырă тĕслĕхне ытти ял тăрăхĕсенче те усă курма сĕнчĕç.

Паянхи кун районта «Хăрушлăхсăр муниципалитет» тĕллевлĕ программа ĕçлет. Ăна çуркунне йышăнса пурнăçламалли ĕçсен планне çирĕплетнине С. Наумов ырларĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова каланинчен ку программăпа палăртнă мероприятисене пурнăçласинче район администрацийĕпе килĕштерсе ĕçлени сисĕнчĕ. Акă август уйăхĕнче те хушма укça-тенкĕ уйăрса сотрудниксен ĕçĕнче тăтăш усă курмалли портативлă алкотестер тата автомашинăсен кантăкĕсем çутă кĕртессине тĕрĕслемелли ятарлă хатĕр туяннă. Çĕнĕ техника ĕçре пысăк пулăшу кÿрессе пĕлтерчĕç полицейскисем. Полицин участокри уполномоченнăйĕсене ял тăрăхĕсенче уйрăм пÿлĕмсемпе тивĕçтересси те ыйту кăларса тăратмасть. Кунта та район администрацийĕпе тачă çыхăнура пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлени палăрчĕ.

Полицейскисен ĕç дисциплини пирки те, вĕсем хатĕрлекен материалсен пахалăхĕ пирки те калаçмасăр иртмерĕç ларура. Муркаш район сучĕн председателĕ Э. Тарасова тата район прокурорĕ С. Фирсов каланă тăрăх полицейскисемпе çыхăнса ĕçленĕ май вĕсем хушшинче куллен тухакан ыйтусене çийĕнчен татса парасçĕ. Ĕç материалĕсен пахалăхĕ те маларах тапхăртипе танлаштарсан ÿснĕ. С. Наумов вара: «Ĕç пахалăхĕнчи çитменлĕхсене курмăш пулмалла мар, сотрудниксене тăтăшах вĕрентессине йĕркелемелле», – тесе палăртрĕ. Çакăнпа пĕрлех канашлура çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх, ача-пăча преступноçĕ, хĕç-пăшалсен саккунсăр çаврăнăшĕ тата ытти чылай ыйту тавра калаçу пулчĕ.

«Ырă улшăнусем сахал мар, вĕсене тытса пымалла, çитменлĕхсем пирки те манма юрамасть», – çапла пĕтĕмлетÿ туса С. Наумов малашнехи плансене тĕрĕс палăртма сĕнчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ĕçре хастар



## 20 çула яхăн – ачасемпе

***«Березка» ача садĕнче вăй хуракан Татьяна Анатольевна Петрова 20 çула яхăн ачасемпе ĕçлет. Вĕсене воспитани парассинче тĕрлĕ методикăпа усă курать вăл. Юлашки çулсенче вара çул-йĕр правилисемпе паллаштарасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. «Ачасем хăйсене хăрушлăхран асăрхаттарма пĕлччĕр», – тет вăл. Ачасен ашшĕ-амăшĕпе те тачă çыхăну тытать воспитатель. Нумаях пулмасть пултаруллă воспитателĕн ĕçне район администрацийĕн Тав çырăвне парса хакларĕç.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

Саккун тавра

# Тупăшран тытса юлма ирĕк пур

Обществăра çирĕп те йĕркеллĕ çемьесем пулни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакă вăл патшалăхăн тĕп пуянлăхĕ кăна мар. Çирĕп çемьесем хăйсемех патшалăха çемьесен тăнăçлăхне ÿстерес тĕллевлĕ социаллă гарантисен механизмне ĕçлеттерсе яма хистеççĕ. Çемьесенчи тăнăçлăх вара экономика ÿсĕмĕпе те, демографи лару-тăрăвĕпе те тÿрремĕнех çыхăнса тăрать.

Анчах та тепĕр енлĕ социаллă механизм ĕçлесе ярасси те çемьесемпех çыхăннă. Çемье арканни алимент тÿлес ыйтупа юнашарах тăрать. Алимент тÿлессине суд палăртать. Алимента кам тÿлесси мăшăр уйрăлнă хыççăн суд ачана кампа (е ашшĕпе, е амăшĕпе) хăварма палăртнинчен килет.

Алимент вăл укça, ăна тÿлессин условийĕ – çемьере ача пурри. Çавăнпа та ашшĕ е амăшĕ çемье арканман чухнех алимент тÿлеттерес ыйтăва татса пама пултарать. Çакăн чухне мăшăр хушшинче алимент тÿлесси пирки тунă килĕшĕве нотариус патĕнче çырса çирĕплетмелле. Çак документ хăйĕн пĕлтерĕшĕпе пурнăçлав листипе (суд паракан) пĕр пек вăйра тăрать. Вăл пулсан алимента суд йышăнăвĕпе палăртма кирлĕ мар. Ку вара нотариус патĕнче илнĕ документпа арăмне е упăшкине алимент тÿлес тивĕçе пурнăçлаттарма тесе суд приставĕсен службине тÿрех пыма ирĕк парать.

Алимент виçи çапла: пĕр ачашăн – ĕç укçин тата (е) ытти тупăшăн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ, икĕ ачашăн – пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ, виçĕ тата ытларах ачашăн – çурри. Судья хăйĕн йышăнăвĕпе алимент виçине пĕчĕклетме е пысăклатма пултарать. Алимент укçинчен налук тытăнмасть.

Алимента ĕç укçинчен кăна мар, ытти тĕрлĕ тупăшран та тытса юлма ирĕк пур. Ăна РФ Правительстви çирĕплетнĕ ятарлă переченьте палăртнă. Пур пособирен те, пенсипе стипендирен те алимент тытса юлма саккунлă ирĕк пур. Çапла вара алимент укçине чылай тĕрлĕ тупăшран тытса юлма пулать.

Ĕç паракан патĕнче алимент тÿлеме çирĕплетнĕ çын ĕçлет пулсан унăн тата хушма тивĕç тупăнать: ĕç паракана çав çыннăн ĕç укçинчен алимент пайне уйăхсерен куçарса тăмалла. Мĕншĕн тесен алимент тÿлекенсен «ырă кăмăлĕ» çине ытларах чухне шанма çук.

Нумай чухне алимент тÿлекенсем вĕсем – ашшĕсем. Анчах та çакăн пек лару-тăрăва лексен вĕсем хăйсен пĕтĕмĕшле тупăшне кăтартмаççĕ. Çапла чухне ача амăшĕ «саккун тăрăх» урăх нимĕн те тăвайманнипе çыхăнтараççĕ вĕсем. Çак вăхăтра вара, сăмахран, хĕрарăм çулталăк çурăччен ачана пăхмалли отпуска виçĕ пин тенкĕне яхăн пособи илсе тăрать, ача ашшĕ «конвертра» 20 пин тенкĕ укçа илет, официаллă ĕç укçи унăн 2 пин тенкĕпе танлашать.

Чылай мăшăр, ашшĕ-амăшĕ е ачисем те нумайăшĕ тăванĕсене пăхса тăрассипе хăйсен тивĕçĕсене пĕлмеççĕ е пĕлмен пек пулаççĕ. Харпăр хăйĕн интересĕсене суд урлă хÿтĕлеме те кашнинех искпа тухмасть. Тăван-хурăнташа судпа явап мĕнле тыттарăн-ха тени малта. Чăнлăха, тĕрĕслĕхе вара ытларах чухне суд урлă кăна татса пама май пур. Çавăнпа та суда искпа тухмалли право пуррине кашниййĕнех пĕлмелле, суд приставĕсем киле пырса тивĕçе пурнăçламалли пирки аса илтеричченех.

**С. ШАРАПОВ,**
**Муркашри суд приставĕсен службин суд пристав-исполнителĕ.**

# Вĕсем – алимент парăмçисем

***Районта алимент парăмçисен йышĕ ÿссех пырать. Сăлтавĕ кунта тĕрлĕрен: пĕри эрехе нимрен мала хурать, тепри аякка ĕçлеме тухса кайнă та çемье пирки пачах маннă. Апла-и, капла-и – ачан вара ÿссе аталанмалла. Ку тĕлĕшри парăмçăсен ытларах пайĕ вăй питти çулсенчи яланлăх ĕç вырăнĕнче тимлемен, вăхăтлă ĕçрен тупăш илекен е ниçта та ĕçлемен çынсем.***

***Раççей Федерацийĕн саккунĕ ача правине туллин хÿтĕлет. Унăн пурнăç условийĕшĕн ашшĕ-амăшĕ ответлă. Эпĕ район прокурорĕн çумĕнчен, юстици советникĕнчен Ю. Семеновран саккуна сĕмсĕррĕн пăсакансен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма ыйтăм.***

– Чăнах та РФ УК 157 статйинче пăхнă йĕркене пăсакансем, алимент тÿлеменнисем, йышлансах пыраççĕ. Чылай чухне парăмçăсем суд йышăнăвне те пурнăçласшăн мар. Кун пек фактсемпе вара хамăрăн ĕçе татах та çирĕплетме тивет. Саккуна пăсакансемпе прокуратура ĕçченĕсем, суд приставĕсем сахал мар тăрмашаççĕ.

Кунта манăн чи малтанах çÿлерех асăннă саккуна пăсакан, ответлăха туйман хĕрарăмсене асăнас килет: ачашăн амăшĕ çывăхрах. **Лапкас ялĕнче 1973 çулта çуралнă Л. Степанова** саккунлă мăшăрланусăр йышлă ача амăшĕ пулса тăнă. Анчах та вĕсене пăхас тивĕçе вăл туллин пурнăçлама пултараймаn: виççĕшĕ – патшалăх хÿттинче, пĕр ача тĕлĕшпе ăна амăш правинчен хăтарнă...

2006 çулхи тата ун хыççăнхи айăплавсем хĕрарăма тĕрĕс çул çине тăма пулăшайман. Амăш правинчен хăтарни алимент укçи тÿлессинчен хăтармасть. Çапла вара унăн пурпĕр ачана ÿстерме пулăшмалла. Вăл çак ĕçе пурнăçлама тивĕç. 2007 çулхи февраль уйăхĕнчен пуçласа 2012 çулхи июнь уйăхĕччченех алимент парăмĕ унăн 290 пин те 297 тенкĕпе танлашать.

2005 çулта кун çути курнă хĕр ачаран амăшĕ çуралсанах хăтăлас тĕллев лартнă. Çапла вара пĕчĕкскерне Улатăрти ача çуртне ăсатнă. Юрать-ха тепĕр вăхăтран «куккук амăшĕн» ырă чун-чĕреллĕ тăванĕ тупăннă, пĕчĕкскерне хăй хÿтĕлĕхне илнĕ. Анчах та Л. Степанова ку çемьене укçа-тенкĕ тата ытти тĕлĕшпе пулăшман, вĕсемпе кăсăкланман.

Çапла вара суд йышăнăвĕпе ăна ултă уйăх ĕçлесе юсанмалла, тупăшăн вунă процентне патшалăх шутне куçармалла тунă.

Тепĕр парăмçă – **Шаптакра çуралса ÿснĕ, Муркашра пурăнакан Е. Маноль**. Ăна амăш правинчен хăтарнă, 2010 çулта РФ УК 157 статйин 1 пайĕнче пăхнă йĕркене пăсса тунă преступленишĕн айăпланă.

Кун пек айăплав унăн татах та пулнă, анчах та вăл юсанма шухăшламанни аван курăнать. Суд йышăнăвĕпе 1982 çулта çуралнă хĕрарăмăн 2009 çулхи февраль уйăхĕнчен пуçласа çул çитмен ача тĕлĕшпе алимент тÿлемелле. Апла пулин те вăл ку енĕпе тимлемен, 2012 çулхи июнь уйăхĕнчехи 251 пин те 639 тенкĕ парăма татман. Çавăн пекех официаллă майпа ĕçе те вырнаçман.

Унăн ачине тăванĕ хÿтлĕхе илнĕ. Кăçалхи май уйăхĕнче вара вăл ача валли пин тенкĕ çурăна яхăнлăх хăш-пĕр çи-пуç туянса панă. Хĕрарăм вăл е ку ĕçрен хушма тупăш илнĕ, анчах та ăна йăлтах хăй валли тăкакланă. Çапла вара ку хутĕнче суд ăна сакăр уйăх ĕçлесе юсанма, тупăшăн 10 процентне патшалăх шутне куçарма йышăну кăларчĕ.

1976 çулта **Атапай ялĕнче çуралнă А. Блинов** та 2008 çулхи суд йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн парăмçăсен шутĕнче тăрать. Унăн çул çитмен икĕ ачи тĕлĕшпе алимент тÿлемелле. Парăм пуррине шута илсе унăн NOKIA маркăллă телефонне суд приставĕсем арестлеççĕ. Пурлăха уйрăм хак парса вăхăтлăх ун патĕнчех управа хăвараççĕ. А. Блинов вара арестленĕ телефона тепĕр çынна парать, çапла майпа суд приставĕсенчен хăтарать. Çакă РФ УК 312 статьян 1 пайĕнче пăхнă йĕркене пăсни пулать. Суд йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн парăмçăна ултă уйăх тĕрĕслев тапхăрĕ панă.

1962 çулта **Токшикра çуралса ÿснĕ В. Илескин** парăмçă виçĕ ача ашшĕ, вăл шутра иккĕшĕ – çул çитменнисем. Малтанхи преступленисемшĕн ăна çичĕ çул ирĕкрен хăтарнă. 2007 çултан пуçласа вара ачисем вун сакăр çула çитиччен унăн уйăхсерен алимент тÿлемелле. Кăçалхи июль уйăхĕ тĕлне парăм 90 пин те 120 тенкĕпе танлашать. Суд ăна çичĕ уйăх ĕçлесе юсанмалла тата тупăшăн вунă процентне патшалăх шутне куçармалла турĕ.

Суд йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн **Карамалькассинчи А. Несмеловăн** та алимент тÿлемелле. 2011 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи июль уйăхĕ тĕлне вăл 83 пин те 049 тенкĕне çитнĕ. Суд йышăнăвĕпе ăна çичĕ уйăх ĕçлесе юсанмалла, тупăшăн вунă процентне патшалăх шутне куçармалла турĕç. Çапла вара алимент тÿлесси тупăш пуррипе çуккинчен мар, суд йышăнăвĕнчен килет. Апла пулсан ĕç вырăнĕ тупни тата парăма вăхăтра тÿлени пĕлтерĕшлĕ.

Раççей Федерацийĕн Çемье Кодексĕ çул çитмен ачан тивĕçлĕ пурнăç условийĕшĕн ашшĕ-амăшĕ ответлине çирĕплетет. Çавăн пекех çул çитнĕ, анчах ĕçлеме пултарайман ачасене те вĕсенех тивĕçтермелле. Ашшĕ-амăшĕ те ĕç çулне çитнĕ ачасен тимлĕхне хÿтлĕхне тивĕç. Енчен те саккуна пăснă тĕслĕхсем пулсан хÿтĕлеме ыйтса суда заявлени çырмалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

# Кирек епле вăхăтра та ачана тимлĕх кирлĕ

## Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

Ача-пăчана Шупашкара е ытти хулана вĕренме кăларса ярсан вĕсене контрольлесе тăрассине татах та вăйлатмалла. Çул çитменнисене тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче çак тема питĕ çивĕч пулчĕ.

Тăхăр класс хыççăн колледжсемпе техникумсене çул тытнă яш-кĕрĕмрен хăшĕсем унта мĕн тĕллевпе кайнине мансах каяççĕ пулас.

Акă «Шупашкарти ТрансСтройТех техникум» вĕрентӳ учрежденийĕ пирĕн районти икĕ студента кăларса ярас пирки ходатайствăсемпе комиссие тухнă. Шупашкарти 4 № професси училищи тепĕр студента кăларса ярас шухăшлă иккен. Сăлтавĕ – студентсен «хӳрисем вăрăмми». Мĕншĕн тесен занятисене чылай сиктернĕ, производство практикине те ĕçлесе татман, ун пирки отчет тăратасси мĕнне маннă.

Комиссие пынă студентсенчен пĕри хăй вĕренме çӳременнине укçа çитменнипе ăнлантарать. Тепри вара маçтăрпа пĕр чĕлхе тупайманнипе ун çине «çилленнĕ». Ку студент урăх училищĕне куçас шухăш пуррине пĕлтерчĕ. «Пĕрремĕш курсран тытăнса та вĕренме хатĕр», – тет вăл. Çакăн сăлтавĕ маçтăрпа пĕр чĕлхе тупайманнинче кăна мар пулĕ те, анчах та çамрăк чунне уçмарĕ. Унта йĕркеллĕ вĕренме шантарса каларĕ çеç. Виççĕмĕш студенчĕ вара комиссие пачах та пыман, хăй килейменнин сăлтавне те пĕлтермен. Çавăнпа та ун тĕлĕшпе ыйтăва татса пама май пулмарĕ.

Ларура çамрăксем психика тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе çитейменни палăрчĕ. Апла пĕчĕкреххисем пирки мĕн каламалла-ха? Акă Турай ял тăрăхĕнчи пĕр çемьене «уçрĕç» комисси членĕсем. Ку çемьере специалистсен шалтан шала «чавса» кĕрсе каймалли питĕ нумайăйи алă тупанĕ çинчи пекех курăнчĕ. Пуçламăш класра вĕренекен ача хăйĕн амăшĕпе асламăшĕ хушшинче «çухалсах кайнă». Темĕн тĕрлĕ усал ĕçе те ку таранччен çын çине кăларман: килте те, шкулта та асăрхаттарнипе кăна çырлахнă. Нумай пулмасть вара вăл амăшĕн сăмахĕсем çине кӳренсе телефонпа шăнкăравласа полицие суя хыпар çитернĕ: ӳсĕр амăшĕ ăна хĕнет мĕн. Ачапа психологсем çийĕнчех ĕçлеме килĕшрĕç. Анчах шкул та пулин мĕншĕн-ха маларах пĕлтермен çакăн пек йывăр лару-тăрăва лекнĕ ача пирки? Хуравĕ уçă юлчĕ. Мĕншĕн тесен сăлтавĕ нумай.

Ачана кирек епле вăхăтра та тимлĕх кирлĕ. Çакна асра тытмаллине кашни ашшĕ-амăшнех (çирĕм ытла ĕç пăхса тухрĕç) асăрхаттарса каларĕç ларура. Унсăрăн вĕсене çăмăллăнах «çухатма» пулать. Каялла тавăрасси вара питĕ йывăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Халăх инструменчĕсен ансамблĕ – çĕнтерӳçĕ

## Хушма вĕрентӳ



***Районти ачасен пултарулăх çурчĕн Чуманкасси шкулĕнчи уйрăмĕнче халăх инструменчĕсен ансамблĕ ăнăçлă ĕçлесе пырать. Унăн ертӳçи Радимир Александрович Семенов – питĕ пултаруллă çамрăк специалист. Ертӳçĕн тата ачасен тăрăшулăхĕпе ансамбль Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «Ылтăн кĕркунне» фестиваль-конкурсран «Инструментальное исполнительство» номинацире 1 степень дипломанчĕ пулса таврăнчĕ.***

***Ансамбле пĕрремĕш хут çакăн пек пĕлтерĕшлĕ конкурса хутшăнса пысăк çитĕнӳ тума пултарнăшăн саламласа малашне те ăнăçусем сунатпăр.***

**А. РОЖКОВА,**
**ачасен пултарулăх çурчĕн директорĕ.**

## Ыйту – хурав

# «Калани кăлăхах. Мĕн тумалла-ши?»

**«Кӳршĕ-аршăпа килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест. Анчах та кашнин пурнăçĕнчех ку савăнăç тĕл пулмасть çав. Пирĕн акă кӳршĕсемпе ниепле те пĕр чĕлхе тупма май килмест. Вĕсен пӳрчĕ шăп та лăп чикĕ йĕрĕпе ларать. Çапла вара кӳршĕсен пӳртĕнчен пуçласа пирĕн енне вĕсен çĕр лаптăкĕ çук. Анчах та канализаци шăтăкĕ тулса кайсан вĕсем унти шыва витрепе ăсса кăларса пирĕн енпе юхтараççĕ. Пирĕн килти кайăк-кĕшĕк çав шыв юхнине курса унта кĕшĕлтетет. Юхса тухакан шыв шăрши вара сăмсана çурать. Шывне пирĕн енпе юхтарса ямалла маррине темиçе хут та ыйтса калани те кăлăхах. Мĕн тумалла-ши?»**

Çак ыйтăва Мăн Шаптакра пурăнакан пĕр кил хуçи шăнкăравласа пĕлтерчĕ. Паллах, унăн пăшăрханăвне ăнланмалла. Ыйтăва эпир «Роспотребнадзорăн» районти уйрăмĕн специалисчĕсем патне çитертĕмĕр.

Специалистсем кун пек ыйту юлашки вăхăтра чылай тĕл пулнине палăртса каларĕç. «Çавăнпа та ыйту паракан малтанах ял тăрăхĕн администрацийĕпе «ĕçлемелле». Кун пек те ĕç тухмасть пулсан пирĕн пата çырупа тухма пултараççĕ», – пĕлтерчĕç вĕсем.

# Компьютерпа ĕçлеме вĕренесшĕн

Компьютер пирĕн пурнăçа питĕ хăвăрт кĕрсе вырнаçрĕ. Унсăр халĕ нумайăшĕ алăсăр пекех. Анчах та çав хушăрах компьютерпа туслашайманнисем те пур-ха пирĕн хушăра.

Акă Катькас ял тăрăхĕнчен редакцие шăнкăрав килчĕ. Ятне палăртма ыйтман хĕрарăм хăйсен тăрăхĕнче компьютерпа ĕçлеме вĕренес текеннисем сахал маррине пĕлтерчĕ. «Тивĕçлĕ канăва тухмалли вăхăта çитейменнисем те, тивĕçлĕ канурисем те пур пирĕн йышра. Ятарлă курссем йĕркелеме май пур-ши?» – кăсăкланать вăл. Район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пай пуçлăхне В. Лаврентьева çак ыйтăва хуравлама ыйтрăмăр. Хуравĕ çапла пулчĕ:

– Компьютерпа ĕçлеме вĕренес текенсем пурри çынсем активлă пулнине палăртать. Ку лайăх. Çак ыйту ик-виçĕ çул каялла питĕ актуаллă пулнине шута илсе ун чухне ятарлă программăпа вĕрентӳ курсĕсене йĕркеленĕччĕ. Халĕ вара ку ĕçе ыйтакансем пуррине шута хурса вырăнта, паллах, йĕркелеме пулать. Информаципе культура центрĕсенче, библиотекăсенче майсем çителĕклĕ. Компьютерпа ĕçлеме вĕрентекенсем те унти специалистсемех пулма пултараççĕ. Çакăн евĕр курссем йĕркелени икĕ еншĕн те усăллă пулмалла тесе шутлатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## Прогноз погоды

| | среда 17 октября | | | | четверг 18 октября | | | | пятница 19 октября | | | | суббота 20 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +6 | +8 | +10 | +9 | +9 | +11 | +13 | +10 | +10 | +11 | +14 | +11 | +11 | +13 | +14 | +11 |
| Давление мм | 756 | 755 | 755 | 754 | 754 | 753 | 753 | 754 | 754 | 755 | 754 | 754 | 754 | 753 | 753 | 753 |
| Влажность % | 91 | 93 | 89 | 95 | 95 | 87 | 71 | 82 | 87 | 80 | 65 | 80 | 93 | 90 | 82 | 90 |
| Ветер м/сек | 4 | 4 | 6 | 4 | 5 | 5 | 7 | 5 | 6 | 5 | 8 | 6 | 7 | 5 | 5 | 5 |
| | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 07:30 | 17:46 | | | 07:32 | 17:43 | | | 07:34 | 17:41 | | | 07:36 | 17:38 | |
| Луна восход / заход | | 10:11 | 18:21 | | | 11:34 | 19:05 | | | 12:44 | 20:03 | | | 13:38 | 21:15 | |

## Тав тăватпăр

Юратнă çыннăмăра, хаклă мăшăра, аттене, Çармăçкасси ялĕнче пурăннă Геннадий Петрович Вазикова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата пирĕн йывăр хуйха пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, Юнкăри вăтам шкул коллективне, ветерансен хор ушкăнне, Кăпасри шахматистсен ушкăнне чĕререн тав тăватпăр.

**Вазиковсен çемйи.**

## К сведению граждан

# О публичных слушаниях

В соответствии со статьями $96^1$, $96^2$, $96^3$, $96^4$ Закона Чувашской Республики «О регулировании бюджетных правоотношений в Чувашской Республике» 8 ноября 2012 года Государственный Совет Чувашской Республики проводит публичные слушания по проекту республиканского бюджета Чувашской Республики на 2013 год и на плановый период 2014 и 2015 годов.

Проект республиканского бюджета размещен на официальном сайте Государственного Совета Чувашской Республики (gs.cap.ru).

Предложения по проекту республиканского бюджета Чувашской Республики на 2013 год и на плановый период 2014 и 2015 годов просим направить в Государственный Совет Чувашской Республики не позднее 28 октября 2012 года по адресу: 428004, г. Чебоксары, Президентский бульвар, дом 10.

Публичные слушания состоятся в Большом зале заседаний Дома Правительства (г. Чебоксары, Президентский бульвар. Дом 17).

Начало в 10 часов.

Конт. тел.: 62-13-77, 62-20-00.

**Государственный Совет Чувашской Республики.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.**

* * *

**Работа в Москве и МО: фасовщицы, упаковщицы, грузчики, комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – БЕСПЛАТНО. Вахта 15, 20, 30, 45 дней, з/п от 27 000 руб. (своевременная). Тел.: 8(8352) 36-42-92, 36-42-94. 5-5.**

* * *

**Продам: кровати армейского образца – 1000 руб.; матрац, подушка, одеяло – 700 руб.; дверь металлическая производство Китай – 3000 руб. Доставка бесплатная. Тел.: 8-915-051-94-23, 8-916-417-06-84. 5-12.**

* * *

**Декабрĕн 5-мĕшĕнче улттăмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-863-31-14.**

* * *

**Семья срочно снимет квартиру, возможна предоплата, порядок и чистоту гарантируем.**
**Тел.: 8-917-664-09-53, 8-917-664-09-52. Сергей.**

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче пăруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатпăр. Актай ялĕ. Тел.: 8-960-313-14-93.**

* * *

**Шурă шултра индоуткăсем сутатăп.**
**Тел.: 8-961-341-22-98.**

* * *

**Хĕрлĕ тĕслĕ пăруламалли тынашки, 7 уйăхри пăру сутатпăр. Тел.: 8-917-651-11-97.**

* * *

**Продаю березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру в поселке Верхний Ямоз Ядринского района. Тел.: 8-903-346-91-66. 1-2.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-853-86-04.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 4-10.**

**Заводские пластиковые окна в 2 раза дешевле! Замер, доставка бесплатно! Тел.: 8-906-385-29-30. 4-10.**

Тăванĕсемпе хурăнташĕсем тата кӳршисем Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Шупуç ялĕнче пурăннă тăванĕ, çывăх çынни тата кӳрши

**Юлия Мироновна**
**ПЫРКИНА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки таранннăн хурланса пĕлтерессĕ.

Муркаш райпо коллективĕ «Сказка» кафере поварта ĕçлекен Н.К. Тихоновăн

**АШШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 16.10.2012 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4683.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.